*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

90 (2502) №
Хакĕ ирĕклĕ

1991 çулхи апрелĕн
21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ЭРНЕКУН

2014,
ноябрь/чӳк, 21

## ПУРНĂÇ ТАППИ

### Пĕрремĕш вулав

Патшалăх Канашĕн черетлĕ 25-мĕш сессийĕнче республикăн 2015 çулхи бюджет проектне тата ун хыççăнхи икĕ çулăн планне пĕрремĕш вулавпа йышăннă.

Финанс министрĕ Светлана Енилина çитес çул бюджетăн тупăш пайĕ 33,5 млрд тенке яхăн пуласса палăртнă. 2015 çулта хамăрăн тупăшсен пайĕ 22,8 млрд тенкĕ шайĕнче пуласса шанаççĕ, ку вăл – 68,5 процент. 2016 çулта ку сумма 24,3 млрд тенкĕ таран ӳсĕ тата тепĕр çултан 26 миллиардран иртĕ.

Тăкак шайĕ 2015 çулта 36,8 млрд тенкĕ патнелле капашĕ, 2016 çулта – 37,7 млрд, 2017 – 39,5 млрд тенкĕ. Тăкаксен пысăк пайĕ социаллă пурнăçа культура тытăмне кайĕ. Вăл шутран вĕрентӳ пайне – 30 процент, сывлăх сыхлавĕпе социаллă политика валли – 20,5 процент.

Бюджетăн тупăш пайĕ пĕчĕкленнине министр экономикăри лару-тăрăвăн уйрăм саманчĕсемпе çыхăнтарнă. Саккун проекчĕн иккĕмĕш вулавĕ ноябрĕн 27-мĕшĕнче иртĕ.

### «Чăваш Ен – Атăл чĕри»

ЧР Министрсен Кабинечĕн председателĕ Иван Моторин Мускавра Раççейре туризма аталантарас енĕпе ĕçлекен координаци канашĕн ларăвне хутшăннă. Унта çитес виçĕ çулта отрасль мĕнле аталантарассине сӳтсе явнă.

Ларура Иван Моторин «Чăваш Ен – Атăл чĕри» проектпа паллаштарнă. Проект ку чухнехи туризм инфратытăмне йĕркелеме тата республика территорийĕпе иртекен федерацин М7 автоçулĕпе çулçӳреве тухнă туристсен ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме палăртать.

Автотуристсене илĕртме çул хĕррипе машинăсене лартмалли объектсем, сутуилӳ предприятийĕсемпе апат-çимĕç сутакан вырăнсем, автотранспорта юсаса тĕрĕслемелли станцисем, сувенир лавккисемпе музейсем йĕркелеме шухăшлаççĕ. Çулла – хĕвелпе хĕртенме, хĕлле йĕлтĕрпе ярăнма вырăнсем йĕркелессине те манман.

Раççей культура министрĕн заместителĕ Алла Манилова «Чăваш Ен – Атăл чĕри» проекта ырласа йышăннă, ăна пурнăçа кĕртме ăнăçу суннă.

### Малашлăха палăртса

Ноябрĕн 17-18-мĕшĕсенче Мускавра Пĕтĕм Раççейри Халăх фрончĕн иккĕмĕш форумĕ иртнĕ. Унта Халăх фрончĕн активисчĕсем, Раççей Президенчĕн шаннă çыннисем, бизнес пĕрлĕхĕн, РФ правительствипе ведомствăсен представителĕсем, политологсем хутшăннă. Пирĕн республикăран кайнă делегаци йышĕнче – регион уйрăмĕн çумпредседателĕ Николай Казаков, Владимир Путинăн шаннă çыннисем – Геннадий Матвеев, Валентина Теллина, Валерий Туркай, регионти ĕçтăвкомăн ертӳçи Николай Косьев.

Тĕлпулура В. Путин Президентăн май уйăхĕнчи указĕсене тата унăн хушăвĕсене регион уйрăмĕ мĕнле пурнăçланине пăхса тухнă, Раççей экономики санкци условийĕсенче мĕнле аталаннине тишкернĕ, малашнехи çул-йĕре сӳтсе явнă.

Ĕнер Форум ĕçне хутшăннă делегатсем журналистсемпе пресс-конференци иртерчĕç. Тĕплĕнрех – çитес кăларăмра.

## КĔСКЕН

**«Граждансене Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă ишĕлме пултаракан пурăнмалли çурт-йĕр фондĕнчен куçарасси» программăпа килĕшӳллĕн 2013-2017 çулсенче республикăра 860 çуртран 13,2 пин çынна çĕнĕ çурта куçармалла. ЧР строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕр министерстви пĕлтернĕ тăрăх – пĕрремĕш тапхăрта, кăçалхи çул вĕçлениччен, 267 çуртран 3824 çынна куçармалла. Хальлĕхе çĕнĕ хваттерсене 1201 çын куçнă.**

**Ял хуçалăх министерстви ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ, усă курман çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртес ĕç малалла пынине пĕлтерет. Кăçал 8960,4 гектар çĕре çаврăнăша кĕртнĕ.**

**ЧР Конкуренци политики тата тарифсем енĕпе ĕçлекен патшалăх служби пĕлтернĕ тăрăх – 2015 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 30-мĕшĕччен пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тарифĕсем 2014 çулхи декабрь шайĕнче юлаççĕ. Çулталăкăн иккĕмĕш çурринче вара шывпа тивĕçтернĕшĕн тата шыв юхтарса кăларнăшăн тӳлев 12,2 процент таран ӳсме пултарать, ăшăпа тата электроэнергипе тивĕçтересси – 8,8, газпа тивĕçтересси – 7,5 процент таран.**

**ПАЯН** кун тăршшĕ 7 сехет те 54 минут. Уйăх каталса пырать.

Михал кунĕ. Çак кунран вильăхчĕрлĕхе хĕллехи апат çине куçарнă. Йывăççене пас тытни – юр нумай çăвасса. Ир-ирех тĕтре карни – ăшăтасса. Михал кунĕнче юр ӳкни – хĕл шурă лашапа çитсе тăни.

**ЫРАН** – Хĕллехи Матĕрнерен – çывăх вăхăтри кунсем мĕнлерех пуласса чухланă. Тăм ӳкни сивĕтессе, тетре анни – ăшăтасса. Хĕл ура çине тăрать.

**ВИÇМИНЕ** – Ераст кунĕ тем те кăтартма пултарать: сивĕ те, выçлăх та, çил-тăман та.

КИЛ

ЯЛ-ЙЫШ ХӲТЛĔХ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

## ЫЙТУ-ХУРАВ

### Качака уксахлать



**? Çулла качака туяннăччĕ. Çăвĕпех уйра кăкарăнчăкра пулнă, каçпа сарайне хупаттăм. Халĕ тăтăшах хупăнса тăрать, картишне усăлма кăна кăларатăп. Çакна асăрхама пуçларăм: качака утнă чухне уксахлать, тăнă вăхăтра вара хăрах ури çине тĕревленесшĕн мар. Мĕн пулчĕ-ши качакапа?**

**Юлия ИВАНОВА. Çĕрпӳ районĕ.**

Кирек епле выльăх уксахлама пуçласан малтан унăн урине пăхмалла. Чĕрни ӳссе кайман-и? Кĕтӳре çӳренĕ вăхăтра, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна кăкарнă чухне вăл çийĕнсе ытла нуша кăтартмасть. Сахалтарах çӳретме пуçласан вара хытах ӳссе кайнипе качакана йĕркеллĕ утма чăрмантарать. Сăлтавĕ çакăнпа çыхăннă пулсан ӳссе кайнă чĕрнене сад пахчинче усă куракан секаторпа е чĕрне касмалли ятарлă хатĕрпе касмалла. Чĕрĕ тĕртеме сиенлесрен асăрханса ĕçлемелле. Хĕл умĕн сарайне хупиччен тата çуркунне кĕтĕве кăларичченкачака чĕрнине лайăх тĕрĕслемелле, касмалла.

Ытлашши ӳссе кайнă тата тĕрĕс мар аталаннă чĕрнене пула тепĕр чухне выльăхăн шăмă сыпписем те ыратаççĕ. Качакан ура сыпписем шыçăнса, тăртанса, вĕриленсе тăнине асăрхасан ăна ветеринара кăтартмалла.

Выльăх тăракан сарайĕнчи урай хăми сĕвек е çав тери хытă (бетон) пулни те уксахлаттарать, чир-чĕре ярать.

### Кукшаллă çĕрулми

**? Çĕрулми тухăçĕпе савăнтарсах каймарĕ кăçал. Кукшаллисем те пурччĕ. Малашне унашкал ан пултăр тесен мĕн тумалла-ши?**

**Мария ЯКИМОВА. Вăрмар районĕ, Чупай ялĕ.**

Кукша инфекцийĕнчен хăтăлас тесен малтанах вăрлăха улăштармалла, пусă çаврăнăшне пăхăнмалла.

Çĕрулмине кăларса илнĕ хыççăн ана çинче нимĕнле авăр та хăвармалла мар. Кукша уйрăмах хăйарлă çĕр çинче, çавăн пекех тăпра йӳçеклĕхне чакарассишĕн кĕркунне е лартас умĕн извеçленĕ çĕр çинче ӳсекен çĕрулмине тапăнать. Çакă паларсан çĕре минерал удобренийĕ хывмалла.

Çĕрулми анине улăмлă навус хывасран асăрханăр, мĕншĕн тесен вăл чире аталанма пулăшать.

Çĕрулмине тăтăшах пĕр вырăнта ӳстерсен çĕре сыватма хăвăрт пулса çитекен сидератсем пулăшĕç. Ку вăл – горчица, çурхи рапс. Вĕсене акиччен çĕре минерал удобренийĕ хывмалла. Çакă симĕс массăна лайăхрах ӳсме май парĕ. Октябрьте ăна çĕр ăшне вармалла.

Таса та сывă вăрлăха нимĕн те çитмĕ. Хальхи вăхăтра кукша чирне парăнман сорт чылай: Волшебница, Ресурс, Чародей, Голубизна, Изора, Витязь, Жуковский ранний, Брянский надежный.

Агротехникăна пăхăнса ĕçлесен паха тухăç илме пулĕ.

| ÇАНТАЛĂК Шупашкарта | Вăхăт | 21.11 | 22.11 | 23.11 | 24.11 | 25.11 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, $^0$C | 2-4 сехетре | –5 | –5 | –13 | –14 | –10 |
| | 14-16 сехетре | –3 | –4 | –3 | –9 | –7 |
| Юр çăвать | | – | – | – | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 762 | 757 | 768 | 769 | 761 |

## ВУЛАКАН СĔНЕТ

### Йод, хаяр шĕвек, хурăн тикĕчĕ

Хаяр çулçи сарăхма пуçласанах хăйне евĕр хаяр шĕвек хатĕрлетĕп: 10 л шывра 1 кашăк типĕ горчица тата 1 кашăк бор кислоти ирĕлтерсе çулçă çийĕнчен яратăп. Çакнашкал шĕвекпе çулçă сарăхма пуçласанах сапмасан кайран кая юлать, тухăçа савăнăмăн.

Çăнăхла сывлăм (мучнистая роса) чирĕнчен вара помидора бордос шĕвекĕ пулăшĕ: 10 л шыва 1 кашăк пăхăр купоросĕ, 1 кашăк «сӳнтернĕ» известь тата чĕптĕм чухлĕ теркăланă хуçалăх супăнĕ хушмалла. Çак шĕвек фитофторозран та лайăх хӳтĕлет. Профилактика вырăнне тепĕр чухне ӳсен-тăрана çакнашкал хутăшпа сапатăп: витре шывра 1,5 л уйран шывĕ тата 10 тумлам йод ирĕлтеретĕп (уйрăмах ку помидоршăн усăллă).

Колорадо нăрринчен вара витре шывра 1 кашăк уксус эссенцийĕ ирĕлтерсе унпа çĕрулми тĕмĕсене сирпĕтмелле. Нăрăпа кĕрешме хурăн тикĕчĕ те пулăшĕ: 10 л шывра ăна 100 мл чухлĕ ирĕлтермелле.

**Алевтина СЕРГЕЕВА.**

### Пахча патши – купăста

Кашни çулах пĕр тĕрлĕ сорт «Московская поздняя» текен купăста çитĕнтеретĕп. Пĕр рет лартатăп. Унăн тăршшĕпе вара календулăпа бархатцы акатăп. Куçа илемĕпе савăнтарнисĕр пуçне вăл купăстана тапăнакан лĕпĕшрен тата пыйтăран хăтарать. Сăмах май, календулăна пахчари пур сукмак хĕррине те акма тăрăшатăп. Унăн шăрши шăши таврашне те хăратать. Сывлăхшăн та усăллă, хырăмлăха, пĕвере, ват хăмпине, пыршăлăха тата карланка сиплеме пулăшать.

**Николай ИВАНОВ.**

## ПĔЧĔК ВĂРТТĂНЛĂХСЕМ

• Çăмарта хуппипе çăкăр хыттине ан пăрахăр, пухса пырăр. Типĕтсе вĕтетсен компост купине хушма пултаратăр. Тăватă кунлăха шыва ярса лартсан вара унпа кирек епле ӳсен-тăрана апатлантармалли чаплă шĕвек пулĕ.

• Пахча çимĕçе шăши тавраш кăшласран тĕпсакайне хурăн тикĕчĕпе е Вишневский маçĕпе сĕрнĕ пусма таткисем хурса тухмалла.

# Нумай ачаллисене – ҫӗр

Сывлӑха сыхлас ӗҫ министерстви пӗлтернӗ тӑрӑх – 2014 ҫулхи октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне пирӗн республикӑра нумай ачаллӑ 9713 ҫемье пурӑнать. Ноябрӗн 10-мӗшӗ тӗлне республикӑри районсенче ҫӗр лаптӑкӗ илме черете тӑнӑ нумай ачаллӑ 5179 ҫемьене шута илнӗ. Вӗсене тивӗҫтерме 3234 лаптӑк уйӑрнӑ.Ҫӗрлӗ пулас тетенсем уйрӑмах Шупашкар хулинче нумай: 1724 ҫемье, Ҫӗнӗ Шупашкарта – 489, Канашра – 308, Шупашкар районӗнче – 532.

«Чӑваш Республикинчи нумай ачаллӑ ҫемьесене ҫӗр лаптӑкӗпе тивӗҫтересси ҫинчен» саккун пурнӑҫланма тытӑннӑранпа республикӑри вырӑнти хайтытӑмлӑх органӗсем 2753 ҫемьене сертификат панӑ. Ку нумай ачаллӑ ҫемьесен 53 процентӗ. Ҫӗр лаптӑкӗпе еплерех усӑ курассине ҫемьесем хайсем татса параҫҫӗ:

• 1766 ҫемье пурӑнмалли уйрӑм ҫурт тума палӑртнӑ;

• 378 ҫемье хирте хушма хуҫалӑх йӗркелеме усӑ курать;

• 563 ҫемье кил-ҫурт ҫывӑхӗнче хушма хуҫалӑх йӗркелет;

• 46 ҫемье дача тӑвать.

Муркаш, Ҫӗрпӳ районӗсенче тата республикӑри хуласенче пурӑнакан нумай ачаллӑ ҫемьесем уйрӑм ҫурт тӑвасшӑн. Вӑрнар, Йӗпреҫ, Комсомольски, Шӑмӑршӑ, Елчӗк, Тӑвай районӗсенче тӗпрен илсен – хушма хуҫалӑх йӗркелесшӗн. Вӑрнар, Куславкка, Сӗнтӗрвӑрри, Вӑрмар, Етӗрне районӗсенче тата Шупашкар хулинче ҫӗре дача тума илнӗ ҫемье чылай.

Кӑҫал Хӗрлӗ Чутай, Сӗнтӗрвӑрри районӗсенче ҫемьесене ҫӗр лаптӑкӗ пачах та уйӑрман. Вӑрмар район администрацийӗ вара 1 ҫемьене кӑна тивӗҫтернӗ, Вӑрнар, Комсомольски, Красноармейски, Ҫӗмӗрле районӗсенче – 2-шер ҫемьене.

Паянхи куна Улатӑр, Канаш, Пӑрачкав, Ҫӗмӗрле районӗсенче шута илнӗ нумай ачаллӑ ҫемьесене ҫӗр лаптӑкӗпе тӗппипех тивӗҫтернӗ. Хӑш-пӗр хулара ирӗклӗ ҫӗр ҫуккипе ӗҫ-пуҫ йывӑррӑн пырать. Канаш хулинче ҫӗр ыйтакансен 19 процентне ҫеҫ тивӗҫтернӗ, Ҫӗнӗ Шупашкарта – 7, Ҫӗмӗрлере – 16 процентне.

# Мунчана – кӳршӗ енне каҫса

Валентина Максимовна пенсионеркӑн Шупашкар районӗнче сад участокӗ пулнӑ. Сывлӑхӗ йӑвашланса ҫитнипе вӑл унта юлашки ҫулсенче сайра хутра ҫеҫ ҫӳрекеленӗ: пахчана тирпейлесе тӑма тата кӗркунне панулми пуҫтарма. Юлашки икӗ ҫулта вӑл унта пачах пырайман. Анчах кӑҫал хайӗн пахчине пырсан унта мунча ӳссе ларнинчен шутсӑр тӗлӗннӗ.

«Мунчана манӑн ҫӗр пайӗ ҫине кӗрсе лартнӑ. Эпӗ тӳрех председатель патне ҫитрӗм. Унӑн сӑмахӗ тӑрӑх – кӳршӗн документсем пӗтӗмпех йӗркеллӗ-мӗн. Ҫӗр лаптӑкӗн чиккине палӑртса висӗни, свидетельство хучӗ – пурте пур. Прокуратурӑна кайма тиврӗ, мӗншӗн тесен кӳршӗпе калаҫнипех ӗҫ тухмарӗ», – пӗлтерет чун ыратӑвне Валентина Максимовна.

Шупашкар район прокуратури пенсионерӑн ыйтӑвне пӑхса тухма Раҫҫей реестрӗн Чӑваш Республикинчи управленине ярса панӑ. Шӑпах ҫак ведомство ҫӗр лаптӑкӗпе тӗллевлӗ усӑ курнине, ҫӗр саккунне пӑхӑннине тӗрӗслесе тӑрать. Патшалӑхӑн ҫӗр инспекторӗ вырӑна тухса Валентина Максимовнӑн тата кӳршин ҫӗр лаптӑкӗсене висӗнӗ, докуменчӗсене тӗрӗсленӗ.

Инспектор тӗрӗслевӗ мӗн кӑтартнӑ-ха? Сад юлташлӑхне 1994 ҫулта йӗркеленӗ. Шупашкар район пуҫлӑхӗн постановленийӗпе килӗшӳллӗн кама-кама ҫӗр лаптӑкӗ тивӗҫни пирки список ҫирӗплетнӗ. Валентина Максимовнӑн кӳрши вӑл спискора ҫук. Ҫӗнӗрен хушма список туни ҫинчен калакан информаци те ҫук. Хут тӑрӑх – пенсионерӑн кӳрши участока 2010 ҫулта ҫеҫ туяннӑ. Ҫӗр лаптӑкӗ номерӗ ҫумне «а» саспалли хушса хунӑ. Ирӗклӗ ҫӗр ӑҫтан тупӑнни паллӑ мар, тен, пӗтӗмӗшле усӑ курмалли ҫӗр пайӗнчен катса илнӗ? Сад юлташлӑхӗн председателӗ ку тӗлӗшпе нимӗн те хуравлаймасть, вӑл ҫӗнӗ ҫын, унччен хуҫа ӗҫӗшӗн яваплӑ мар. Хамӑр енчен эпир ку ыйтупа малалла та ӗҫлӗпӗр-ха. Кӳршӗ хайӗн мунчине Валентина Максимовнӑн ҫӗрӗ ҫине кӗрсе лартни чӑннипех те курӑнать, анчах ҫакна документпа ҫирӗплетме май ҫук. Пенсионерӑн ҫӗр лаптӑкӗн чиккине виҫсе тунӑ хут (межевани) ҫукки пӗтерет. Урӑхла каласан, унӑн пахчин чиккине кӑтартман. Паллах, патшалӑхӑн кадастр службинче ҫӗр лаптӑкне малтан шута илни пур, ун чухне чикке палӑртни кирлех те пулман. Халӗ вара Валентина Максимовнӑн хайӗн правине пӑснине суд урлӑ ӗнентерме тивет. Урӑхла май ҫук.

Раҫҫей реестрӗн республикӑри управленийӗ ҫӗр лаптӑкӗн хуҫисене ҫакна асӑрхаттарасшӑн: кунашкал тӗслӗх Чӑваш Енре чӑннипех те нумай. Куҫман пурлӑх правине вӑхӑтра ҫирӗплетмелле, ҫӗре чикӗлес ӗҫе те вӑраха ямалла мар, ҫӗр лаптӑкӗ пулсан ӑна кадастр учетне тӑратса патшалӑх регистрацийӗн свидетельствине илмелле.

Ҫак тӗрӗслев хыҫҫӑн Валентина Максимовна кӳршипе калаҫса татӑлма пултарнӑ. Кӳрши мунчине пачах урӑх енне куҫарма шантарнӑ.

**Марина ИВАНОВА, Раҫҫей реестрӗн республикӑри управленийӗн ертӳҫин пулӑшаканӗ.**

## КИРЛӖ ПУЛӖ

# Эмел тата апат

**Тухтӑр вӑл е ку эмеле ҫырса панӑ чухне ӑна хӑш вӑхӑтра тата мӗнпе ӗҫмеллине палӑртать. Анчах хӑш-пӗр эмеле мӗнле ӗҫмеллине инструкцире те палӑртмаҫҫӗ.**

Антибиотиксемпе сипленнӗ хушӑра сӗт, тӑпӑрчӑ, сыр, маринадланӑ, консервланӑ ҫимӗҫсем ҫиме хушмаҫҫӗ.

Сульфаниламидсем микробсене хирӗҫ кӗрешме пулӑшаҫҫӗ. Вӗсемпе усӑ курнӑ вӑхӑтра ҫуллӑ апат-ҫимӗҫпе вылӑх ӑш-чиккинчен хатӗрленине ҫиме юрамасть. Сахӑрпа ҫӑкӑр тавраше, йӳҫӗкрех ҫырла, ешӗл ҫимӗҫ сахалрах ҫимелле. Унсӑрӑн пӳрере чул пухӑнма пултарать.

Юна шӗветекен препаратсем (антикоагулянтсем) шур ҫырлипе (клюква) каймаҫҫӗ. Хырӑмлӑхран юн кайма пултарать. Тромб пуласран ҫырса паракан аспирина ӗҫсен лимон ҫиме юрамасть, язва пулас хӑрушлӑх ӳсет.

Ыраттарнине ирттерекен эмел ӗҫнӗ-и? Апла тӗтӗмленӗ, тӑварланӑ, маринадланӑ ҫимӗҫсем юрамаҫҫӗ.

Анемирен ҫырса панӑ эмелпе пӗрле кофе, шоколад, майӑр, сӗт-турӑх каймасть.

Шӑк хӑвалакан препаратсен организма шывсӑрлатакан пылак шывпа, кофепе килӗшсе тӑмаҫҫӗ. Ытларах кали тӑварӗпе пуян ҫимӗҫ ҫимелле, мӗншӗн тесен вӑл организмран ытларах тухса каять. Чи пахи – курага, чернослив, пӗсернӗ ҫӗрулми, симӗс пӑрҫа.

Атеросклероз чухне статинсем ҫырса парсан сиплев тапхӑрӗнче нимӗнле цитрус та ҫиме юрамасть.

## КАМӐН МӖН ЫРАТАТЬ?

**Хырӑмлӑх язви чухне.** 1) Ҫур стакан шыва 1 кашӑк чухлӗ тӳсе ватнӑ аҫтӑрхан майӑрӗ ярса пӑтратмалла, сӑрӑхтармалла, 1 чей кашӑкӗ пыл хушмалла. Кунне 6 хут пӗрер чей кашӑкӗ ӗҫмелле.

2) Кунне 3 хут, апат умӗн 1 сехет маларах, сырлан (облепиха) сӗткенӗ ӗҫмелле.

**Пуҫ ыратсан, хӑлхара шав тӑрсан, чӗре хӑвӑрт тапсан.** Ҫур литр шыва 100 г вӗтетнӗ катӑркас ҫырли (боярышник) ярса йӑваш ҫулӑм ҫинче ҫур сехете яхӑн вӗретмелле, сӑрӑхтармалла. Кунне 3 хут апат умӗн 30 минут маларах 50-100 г ӗҫмелле. Чӗре йӗркесӗр тапнинчен те, ыйхӑ килменнинчен те, атеросклерозран та лайӑх ку.

**Юнри сахӑр шайне чакарма.** 1 стакан кефир ҫине 1 чей кашӑкӗ корица ярса ирпе (выҫварла) тата ҫывӑрас умӗн ӗҫмелле. Ҫапла 8-10 кун таран.

## АЛ АЙӖНЧЕ

# Кавӑн



Кавӑна чылайӑшӗ сап-сарӑ ӑшлӑхӗшӗн юратать. Анчах унӑн тӗшши те питӗ усаллӑ.

Кавӑн тӗшши – организм ҫӑмӑллӑн йышӑнакан белокпа, аргининпа, фолипе глютамин кислотисемпе пуян, унта холин, лютеин, кукурбитин, ниацин, Е витамин, тимӗр, фосфор, магни, пӑхӑр, марганец, кальци, селен пур. Цинк ӑҫта нумай тетӗр? Кавӑнра! Вӑл вара иммунитет тытӑмӗпе хырӑмлӑхай парӗн ӗҫне йӗркелеме, вӑхӑтсӑр ватӑласран хӳтӗленме кирлӗ.

**Тухтӑрсем ӗнентернӗ тӑрӑх – кавӑн тӗшши юн пусӑмне йӗркелеме, юнри сахӑрпа холестерин шайне чакарма, вар хытнине ирттерме, йывӑр ҫын чухне хӑстарнинчен хӑтӑлма тата ӳте сыватма пулӑшать.**

Кавӑн тӗшшипе апат-ҫимӗҫ хатӗрленӗ ҫӗрте те туллин усӑ кураҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра кавӑн тӗшшине лавккара та, пасарта та туянма пулать. Анчах вӗсене ӑҫтан илсе килнине, мӗнле условисенче ӳстернине пире никам та каласа памӗ. Хуппинчен тасатман тӗшӗ кӑна чи сиплӗ. Ӑшаласан усӑллӑ пахалӑхӗ ҫухалать.

**Кавӑн тӗшши пуҫ мимин ӗҫне лайӑхлатать, астӑвӑма ҫирӗплетет, ывӑннине ирттерет. Унсӑр пуҫне организмран наркӑмӑшлӑ япаласене – свинец, кадми – кӑларма, пӗсертсе янӑ ӳте хӑвӑртрах сиплеме пулӑшать, шӗвӗрӗлчене хирӗҫ кӗрешет.**

**Арҫынсемшӗн кавӑн вӑрлӑхӗ уйрӑмах усаллӑ: вӗсем тестостерон кӑларассине йӗркелеҫҫӗ. Простата пуласран, ача пулманнинчен хӳтӗленме те кавӑн тӗшши ҫиме сӗнеҫҫӗ.**

**Нервсене лӑплантарма та аван вӑл, эрех ӗҫсе чуна ҫийиччен кавӑн тӗшши тӗшӗле теҫҫӗ.**

Кавӑна пулса ҫитнӗ хыҫҫӑн, анчах сивӗсем пуҫланиччен пухса кӗртмелле. Тӗшшине вара ҫимӗҫӗ пулса ҫитнӗ хыҫҫӑн 75-80 кунран кӑларсан аван. Ҫак вӑхӑт тӗлне унти нӳрӗк 35-40 процентпа танлашать. Кавӑн вӑррине кӑларсанах шывпа ҫуса типӗтме хумалла.

Кавӑн тӗшшине пир хутаҫра упрамалла.

**Асӑрхаттарни:** *хырӑмлӑхпа пыршӑлӑх тракчӗн чирӗсем, хырӑмлӑх сӗткенӗн йӳҫеклӗхӗ пысӑк, холецистит, ват хӑмпинче чул пур чухне кавӑн тӗшшипе асӑрханса усӑ курмалла. Самӑр ҫынсен те ӑна ытлашши ҫимелле мар, мӗншӗн тесен вӑл питӗ калориллӗ, унта 45 процент таран ҫу пур. Кавӑн вӑррине ӑшаласа тата тӑвар калаттарса ҫиме юратакансен шӑмӑ сыппине тӑвар ларма пултарать. Ҫавӑн пекех тӗшӗ хуппи шӑл эмальне пӗтерет.*



**ӲСЛӖКРЕН.** 1 л сӗте 500 г сухан вӗтетсе ямалла, сухан ҫемҫелсе ҫитиччен вӗретмелле. Юлашкинчен сахӑрпа 2 тумлам пӗтнӗк настойӗ (мята, аптекӑра сутаҫҫӗ) хушмалла. Ҫулӑм ҫинчен илсен сахӑрӗ ирӗлсе ҫитиччен пӑтратмалла. Кунне 5-7 хут пӗрер кашӑк ӗҫмелле. Ҫапла ӳслӗк иртсе кайиччен.

*Асӑрхаттарни: халӑх сӗнекен сывату меслечӗсемпе усӑ куриччен тухтӑрпа канашласа пӑхмалла.*


## РЕКЛАМА, ПӖЛТЕРӲСЕМ

*СУТАТӐП ПРОДАЮ*

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89674704677.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 37-28-74.

**14. Станки для валяния валенок.** Т.: 8-927-861-75-89, 8-937-381-05-85.

**15. КИРПИЧ.** Т. 89613393363.

**22.** Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Дёшево. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89370101054.**

**24. Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**33. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**53. ОТРУБИ, ЗЕРНО, К/КОРМ.** Д-ка. Т. 89613412236.

**58. Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит, чернозем.** Д-ка. Т. 89276687015.

**177. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

**659. ОКНА и ПОТОЛКИ.** Немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. Д-ка, замер бесплатно. **Пенсионерам скидки.** Т. 89176627164.

АХ, АНЧАХ...

# Вăтанман юмăç пулнă

Виç хĕрарăм пĕр пасар тенĕ. Коридор вĕçне пухăннă хĕрарăмсем хĕрсех тем пакăлтатнине кура вĕсем патне пытăм. Ак хайхи, тахçан, вунтăватă- вунпилĕк çул каялла, редакцире пĕрле ĕçленĕ хĕрарăм тăра парать. Пач та улшăнман: ыраш улăм пек саратнă çӳçне кăкăрĕ умне янă, тутине хĕпхĕрлĕ писевпе сăрланă. Сăн-пичĕ çуталса- ялкăшса тăрать. Хулпуççи çине уртса янă кĕрен тĕслĕ сарлака пурçăн шарфĕ тата мĕнлерех хӳхĕм.

– Ай-уй, хăçантанпа курман сана, – ыттисенчен хăпса ман ума пырса тăчĕ хайхи.

– Пĕлетĕн-и эпĕ халĕ камне?

Хулпуççине сиктернине кура малалла такăртаттарма тытăнчĕ.

– Астăватăн-и, сывлăхпа çыхăннă материалсем мана еплерех кăсăклантарнине. Ун чухнех çынсене сиплес килетчĕ. Виçĕ çул каялла ятарласа психологие çыхăннă курс пĕтертĕм. Халĕ эпĕ те сыватма пултаратăп. Алă хăвачĕпе.

Унччен пĕрле ĕçленĕ хĕрарăм çине ним калама пĕлмесĕр пăхса тăратăп.

– Акă, ĕненместĕн пулсан кăтартма та пултаратăп, – тет хайхи ман хыçа тăрса. Аллисемпе ӳте çупăрланăн кĕлеткене перĕнтермесĕрех çӳлтен аялалла, аялтан çӳлелле куçарма пуçлать. Унтан вĕсене вĕçсе каясла сарать:

– Курса тăр, усă варкăш килме пуçлать.

Аллисене çунат пек сарнăскер чăннипех те сывлăш хăвалама пуçлать. Пурçăн шарфĕ хумханса çеç тăрать.

Хăйне мухта-мухта, нумай çынна пулăшнине кала-кала «сиплет» тахçантанпах курман ĕçтешĕм. Хамăн вара кулас та, тарăхас та килет. Анчах иккĕмĕш туйăмĕ вăйлăрах. Кунашкал камите текех чăтса тăма хал çитменрен ĕç нумаййине персе пăрăнса утрăм. Чун пушанса юлчĕ. Вăтанман юмăç пулнă теççĕ. Улталанас тата улталаттарас текенсем пуррипе иртĕхеççĕ ахăртнех.

Алла хамăр хаçата тăтăшах çырса тăраканăн çырăвне илетĕп. «Пичете валли мар ку. Чуна уçса калани çеç, – тесе çырать вăл. – «Хресчен сасси» хамăн тăлăх пурнăçăмри юлташăм, çын ыратăвне те сана кăна калам. Хаçатри рекламăпа пĕлтерӳсен серепине лекнĕ хыççăн вĕсене курайми пулса çитрĕм. «Пăскăнчăка сиретĕп, пурнăçри мĕнпур йывăрлăхран хăтаратăп» текен çын мăшăрăм çĕре кĕричченех укçа сăптăрса пурăнчĕ. Вăл чăн-чăн шарлаттан пулнине арăм ĕмĕрлĕхех куçне хупсан çеç тавçăрса илтĕм. Шел, питĕ кая юлса ăнлантăм çакна».

Республикăри Шалти ĕçсен министерстви те чан çапать, çынсене асăрхануллăрах пулма сĕнет. Мускав ултавçисем радио урлă хăйсен çук таварне рекламăласа вун-вун çынна шăнман пăр çине лартнă иккен. Шар куракансем – ват çынсем. Нумаях пулмасть радиошулĕксен танатине Шупашкарта пурăнакан 75 çулти пенсионер та лекнĕ. Тĕлĕнтермĕш куçлăх илме ĕмĕтленсе хайхискер ултавçăсен счечĕ çине 90 пин тенкĕ ытла куçарнă. Куç çивĕчлĕхне пĕр самантрах ӳстерекен чаплă аппарат çинчен радиопа илтсен хĕрарăм «хĕрӳ лини» телефонĕпе шăнкăравланă. Пирвайхи 10 пин тенке вăл Мускавра регистрациленнĕ уйрăм çын счечĕ çине куçарнă. Çакăн хыççăн ултав çăмхи калама çук пысăк хăвăртлăхпа чăмăртанма пуçланă. Медицина таварĕсемпе тивĕçтерекен компани менеджерĕсем ват хĕрарăма мĕнпур чиртен сыватма диагностика тумаллине пĕлтернĕ. Çӳç пайăркипе чĕрне вĕçне ярса пама ыйтнă. Пенсионер вĕсен хушăвне пионерла тĕп-тĕрĕс пурнăçласа пынă. Мĕн чухлĕ ыйтнă – çавăн чухлĕ укçа куçарса тăнă. Хăйне тирпейлесе пытарма тесе пухса пынă укçи пĕтсен банка кайса кредит илнĕ. Паллах, нимĕнле тĕлĕнтермĕш куçлăхпа та тивĕçтермен ăна. Ултавçăсем çĕр çăтнăн çухалнă. Ват хĕрарăм халĕ полицирен пулăшу ыйтать. Анчах çак пăтравлă ĕçĕн вĕçне-хĕрне тухасси питĕ иккĕленӳллĕ.

Мĕн каласшăн: çăмăллăнах укçа тума май пурри, тар юхтармасăрах тутлă çиме, чаплă тумланма пултарасси хăшне-пĕрне çынлăхран кăларать. Намăс-симĕс куçа кĕменнине кура, хăйсен серепине лекес текенсем тупăнсах тăнипе хавхаланса çине тăрсах «ĕçлеççĕ» вĕсем. Шарфпа та хум яраççĕ, пĕлтерӳсем те параççĕ, радиопа та калаçаççĕ... Çил вĕçтернĕшĕн те укça тӳлекенсем пур чух мĕншĕн айкашас мар теççĕ пулас.

**Елена НИКОЛАЕВА.**

СĔНӲ-КАНАШ

## Тутлă пултăр!

Аш çемçе те техĕмлĕ пултăр тесен ăна тĕрлĕ майпа хатĕрлеме май пур.

Калăпăр, **горчицăпа.** Вăл какай тутине лайăхлатать, тутлă шăршă парать. Аш татăкне усă куриччен горчицăпа сĕрмелле, сехетлĕхе хăвармалла, унтан ăна çуса ямалла. Отбивнăй тăвас тесен ăна касмалла, çапса çемçетмелле, горчицăпа сĕрмелле. 15 минут вырттарсан ăшалама та юрать. Гуляш тумалли аш турамĕсене горчицăпа сĕрни те пăсмасть. Кайран ăна çуса яма та, çаплипех хăварса пăшăхлама та юрать.

**Эрехпе.** Ашпа хатĕрленĕ рагу е шаркку çине пĕр черкке шур эрех ярсан аш самай çемçерех пулĕ. Пăшăхланăçемĕн эрех сĕврĕлсе пĕтет, апла ăна руль умĕнче ларакансем те çиме пултараççĕ.

**Тăварпа.** Пĕрремĕшĕнчен, аша хатĕр пулас умĕн çеç тăвар калаттармалла. Иккĕмĕшĕнчен, ăна кăшт çеç хушмалла. Аш вĕт вăл хăех тăварлă, 1 кг аш валли 1 чей кашăкĕ тăвар кирлĕ.

**Лимон сĕткенĕпе.** Йӳçек тутă какая лайăх çемçетет. Ăна какай çине кăшт çеç пĕрĕхтермелле. Аш маринадланă чух газлă минерал шывĕ те аван.



Ăшаланă чух лимон турамĕ хушсан та какай тути лайăхланать, çемçелет.

Хытă аш-какая **тăварланă купăста шывĕпе** шӳтерсе лартма юрать. Тăварланă хăяр шывĕнчен лайăхрах вăл. Пысăкрах аш турамĕсене çĕçĕпе темиçе çĕртен чике-чике илсен вăл пушшех лайăх сăрхăнĕ.

Пĕçерекен аш çемçе те тутлă пултăр тесен ăна вĕрекен шыва ямалла. Кăшт сахăр хушма юрать, шывне сиксех вĕретмелле мар. Тăвара вара пиçес умĕн 20 минут маларах çеç хушмалла.

### Пулăшма чĕнетпĕр

Эпир мăшăрпа иксĕмĕр те 80 çула çитсе пыратпăр. Ялта пурăнатпăр, вырлăх-чĕрлĕх усратпăр. Ачасем тахçанах хулара тĕпленнĕ. Пире пулăшакан çын кирлĕ. Ниçта та пурăнмалли çукkипе нушаланакан 45-50 çулсенчи хĕрарăма эпир хаваспах хамăр пата йыхравланă пулăттăмăр. Йĕркеллĕ хĕрарăм кăна пултăрччĕ. Т. 8 927 840 63 89.

ХАМĂРА ЮРАТСА

## Илемшĕн çунса

Шăл витĕр шурă пулни темрен те илĕртӳллĕрех шутланать халĕ. Хăшĕ-пĕри вĕсене шуратассишĕн ятарласа дантист патне каять. Çĕр çине пĕри кăвак тĕслĕ куçпа килет, тепри – хăмăррипе, виççĕмĕшĕ – хурипе. Çутçанталăк парни ку, пирĕн унпа çырлахмаллах. Шăл тĕсĕ те çавах: хăшĕсен вăл шурăрах, теприсен – сарăрах. Çав вăхăтрах кашни стоматологах сарăрах тĕслĕ эмаль чи çирĕп пулнине палăртать. Ăна шуратма тытăнсан шăл çийĕнме кăна тытăнать.

Çакна асра тытмалла: кофе, табак, апатçимĕç сăррисем, хăш-пĕр эмел (калăпăр, тетрациклин ушкăнĕнчи антибиотиксем) шăл эмалĕн тĕсне пăсать, çавăнпа та вĕсемпе усă курма тăрăшмалла мар.

Пылак çимĕç сахалтарах çимелле. Вĕсене пула çăварта сиен кӳрекен бактерисем хăвăрт сарăлса кайса эмале çисе яраççĕ. Пурăна киле ку шăл тунисен чирчĕрĕпе кариес пуласси патне çитерет.

Шăлшăн чи пахи вăл – таса шыв нумай ĕçни, панулми, кишĕр, сельдерей, сухан, ешĕл çимĕç çини. Çавăн пекех ĕне вырлăх ашĕ, чăх какайĕ, пулă, сыр, аçтăрхан мăйăрĕ усăллă.

САНАТОРИЙ "НАДЕЖДА"
УВАЖАЕМЫЕ ТРУЖЕНИКИ СЕЛА!
Санаторий «Надежда» желает Вам здоровья, долголетия и приглашает на ЗИМНИЕ СКИДКИ.
Только с 1 декабря по 31 декабря 2014 г. стоимость санаторно-курортной путевки –
10 дней ~~18000 руб.~~ 16500 руб.
К ВАШИМ УСЛУГАМ: ● высококвалифицированный персонал, ● современное оборудование, ● уникальные методы лечения различных заболеваний, ● сауна 2 раза в неделю, ● ежедневно большой бассейн и бассейн с мин. водой.
Справки по тел.: /8352/ 77-04-04, 77-12-70.
Спешите, количество мест ограничено!
ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ,ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ
Реклама
Лицензия ЛО-21-01-001130 от 05.08.2014 выдана Минздрав и соцразвития Чувашской Республики

САЛАМЛАТПĂР!



Тĕнчери чи ырă та чи хаклă çыннăмăра, Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкре пурăнакан **Елена Витальевна МОИСЕЕВĂНА,** çуралнă кун ячĕпе чунтан саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

**Хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

КУЛАР-И?

Çӳç кастарма кĕнĕ ватă профессор кресло çине ларать:

– Тархасшăн, касма пултаратăр.

– Паллах, касатпăр, анчах малтан шĕлепкене хывасчĕ сирĕн.

– Каçарăр, асăрхаман та, кунта хĕрарăмсем те пур-çке!

«ХЫПАР» ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔН КĂЛАРĂМĔСЕНЕ 2015 ÇУЛĂН I ÇУРРИ ВАЛЛИ РАÇÇЕЙ ПОЧТИН КАШНИ УЙРĂМĔНЧЕХ ÇЫРĂНТАРАÇÇĔ.
**«ХЫПАР» – 732 ТЕНКĔ ТЕ 66 ПУС.**
**«ХЫПАР – ШĂМАТКУН» – 304 ТЕНКĔ ТЕ 08 ПУС.**
ÇАВĂН ПЕКЕХ ПИРĔН КĂЛАРĂМСЕНЕ «ЧĂВАШ ПИЧЕЧĔН», «СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ» ХАÇАТĂН КИОСКĔСЕНЧЕ, «ХЫПАР» РЕДАКЦИЙĔНЧЕ ТУЯНМА ТАТА ÇЫРĂНМА ПУЛАТЬ.

## Тăлăх çынпа пĕр «Хресчен сассисĕр» кил. Ватти-вĕтти, яш-кĕрĕм, Васка, çырăнса ил!

**Хресчен сасси – 376 тенкĕ те 62 пус.**
Индексĕ – 54838

**Хресчен сасси-Кил – 184 тенкĕ те 08 пус.**
Индексĕ – 43887




ЮРЛА-ЮРЛА АЛĔÇ ТУМА

Çак илемлĕ чечеке – аслати куракне – канва çине куçарас текенсене кăçалхи «Тăван Атăл» журналăн 10-мĕш номерне пăхма сĕнетпĕр. Клеткăсен шучĕ, тĕрлĕ тĕссен сĕмĕ – пĕтĕмпех куç умĕнче пулĕ.



●●●

Каччă хĕрарсен общежитине килет. Вахтер унран ыйтать:

– Эсир кам патне?

– Эсир кам патне кайма сĕннĕ пулăттăр?

***

– Эх, ыран 60 çул тултаратăп.

– Ан кулян, кун пекки урăх пулмĕ.

